Шалти ĕçсен пайĕнче

Пĕтĕмлетӳсем хастар пулма хистеççĕ

Иртнĕ çулти ĕçе тишкерсе пĕтĕмлетӳсем тума районти шалти ĕçсен пайĕнче январĕн 11-мĕшĕнче иртнĕ канашлава Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин личнăй составĕпе ĕçлекен управлени пуçлăхĕн çумĕ Е. Юрин полковник та хутшăнчĕ.

Малтанах иртнĕ çулталăкăн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕсемпе районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов паллаштарчĕ. Пайăн уйрăмĕсен пуçлăхĕсем тухса каланинчен те пĕтĕмлетӳ тĕрлĕ енлĕ пуласси уççăнах палăрчĕ.

Районта преступленисен хисепĕ чакни, паллах, ырламалли пулăм. Ку кăтарту ĕçĕн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ пулса тăрать. Анчах та канашлура тухса каласакансен сăмахĕсенчен уйрăм енсемпе тивĕçлĕ ĕçлесе çитерейменни те палăрчĕ.

Акă республикăра пĕтĕмĕшле йывăр преступленисен, пурлăхпа çыхăннă преступленисен хисепĕ, вăрă-хурахла ĕçсем, тивертсе янă тĕслĕхсем тата çул çитменнисем йĕркене пăсни чакса пырать. Пирĕн районти ларутăру вара шăпах асăннă енсемпе республикăри вăтам кăтартусенчен япăхрах. Çавăнпах ĕнтĕ Е. Юрин полковник малашне тĕллевлĕн ĕçлемеллине каларĕ.

Канашлава хутшăннă район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А. Андреева вара тухса каласакансене итленĕ хыççăн çул çитменнисемпе ĕçлессине тата милицин участокри уполномоченнăйĕсен ĕçне вăйлатма сĕнчĕ. «Пĕрле канашласа килĕштерсе ĕçлесен эффективлăхĕ те пысăкрах пулать», – терĕ вăл. Ку тĕрĕс сĕнӳ пулчĕ. Канашлура участковăйсен ĕçне тишкернĕ чух, вĕсем çитменнине каланипе пĕрлех, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем ку тĕлĕшпе хăйсен тивĕçĕсене туллин пурнăçламаннине те асăнмасăр иртмерĕç. Виçĕ – Чуманкасси, Юнкă тата Мăн Сĕнтĕр – ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем çеç пакунлисене ĕçре пулăшу панине асăнчĕç. Çапла пулсан тин лару-тăрава лăпкăрах тума май пулассине чылайăшĕ палăртрĕ.

Наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕ тавра та калаçу тулли тишкерӳпе вĕçленчĕ. Криминаллă милици уйрăмĕн ĕçне унăн çулталăкри кăтартăвĕсемпе тата туса ирттернĕ профилактика ĕçĕсемпе паллашса республикăри ытти районсенчен те, республикăри вăтам кăтартусенчен те лайăхрах пулнине палăртрĕ Е. Юрин. Çапла йĕркеленĕ ĕçе тата кăтартусене малашне те эффективлă та оперативлă ĕçленипе тытса тăмалла. Çав хушăрах вара уголовлă шырав ĕçне çӳллĕрех шая çĕклемелли те палăрчĕ.

Обществăлла вырăнсенче видеосăнав системисене вырнаçтарасси районта малалла пырать. Çак ĕçе пурнăçлани те хăрушсăрлăха тытса тăрассинче пулăшатех.

Канашлура сӳтсе явнă чылай ыйту, пĕтĕмĕшле илсен, штатра сотрудниксем çителĕксĕр пулни патне çитсе тухать. Ку – паянхи кун районти шалти ĕçсен пайĕнче çивĕч ыйту. Милицин участокри уполномоченнăйĕсем 3 сотрудник çитменни ытти сен ĕçне йывăрлатнипе ăна туса ĕлкĕрейменни патне илсе çитернĕ те ĕнтĕ. Ытти çитменлĕхсене те вăхăтра пĕтерме ытларах вăй хума шантарса, çак ыйтăва та çитес вăхăтрах татса парассине каларĕç.

Канашлура, кĕтнĕ пекех, Раççей Федерацийĕн Президенчĕн нумай пулмасть кăларнă указĕпе килĕшӳллĕн шалти ĕçсен пайĕн тытăмне реорганизацилессипе çыхăннă ыйту çине те хурав пулчĕ. Икĕ çулта туса ирттерме палăртнă ĕç ытларах управлени пайне пырса тивессине пĕлтерчĕ Е. Юрин. Апла пулсан пессимистла кăмăл-туйăм пачах та пулмалла мар. Хирĕçле – çанă тавăрсах ĕçлемелле, çынсен шанчăкне те тивĕçтермелле.

Н. НИКОЛАЕВА.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

Пĕрле ĕçлесе – ӳсĕмсем патне

«Çĕнĕ çул ячĕпе сире пурне те раштав уйăхĕн 30-мĕшĕнче шкул столовăйне уяв каçне чĕнетпĕр!» – пĕлтерчĕ профком пуçлăхĕ Галина Ивановна.

– Канашлу хыççăн çывăхри лавккана кĕрсе тухар-ха, ыран Ваçкассине каймалла, ялта кĕтекен аннене кучченеçпе савăнтармалла, – терĕ вăл мана, юнашар утаканскере.

Лавкка алăкне уçса кĕрсенех Марина Артюшкина сутуçă: «Çĕнĕ çул ячĕпе сире, юратнă вĕрентекенĕмĕр!» – терĕ çепĕç сассипе. Вăхăт каять пулин те, хăйсен вĕрентекенне манмаççĕ, асра тытаççĕ. Тĕл пулсассăн яланах кăмăллăн сывлăх сунаççĕ, шкулти пурнăç пирки ыйтса пĕлеççĕ.

Хам та мухтанатăп юлташпа, ĕçтешпе. Юлташу хăвăнтан лайăхрах пултăр, тенĕ ватă çынсем.

Пĕр вăхăтра ĕçлеме пуçларăмăр эпир шкулта Галина Ивановнапа. Вăл – пуçламăш классене вĕрентекен, эпĕ – аслă классенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен. Халь кăна ĕçлеме килтĕмĕр пек...

Çирĕм пилĕк çул хушшинче вара аса илмелли те чылай пухăнчĕ. Малтанхи çулсенчех хамăрăн вĕренекенсемпе республикăри конкурсра пĕрремĕш вырăн йышăнса ашшĕ-амăшĕсем Чăваш телевиденийĕпе хăйсен ачисен пултарулăхне курса савăнни те, çулленех сцена çинче халăха савăнтарни те, вĕренекенсем тĕрлĕ мероприятисенче вуланăкаланă сăмахсем чĕререн, шалти туйăмсемпе шăранса тухса çынсен чĕри патне илсе çитерни те... Паллах, вăй хумасăр пулмасть.

Акă раштав уйăхĕн вĕçĕнче те пуçламăш классенче вĕренекенсен ăслăлăхпа практика кунĕ иртрĕ. Пуçламăш классенче пултаруллă вĕренекенсем сахал мар. 1-мĕш класра вĕренекен Марина Лаптева «Манăн пĕрремĕш сăвăмсем тата пирĕн шкул ачисем хайланă сăвăсемпе статьясем» темăпа интереслĕ ĕç хатĕрленĕ. 2 «а» класра вĕренекенсен ĕçĕсем те кăмăла каякан ĕçсем пулчĕç.

«Чи пултаруллисем» ята вара 3 «а» класри Ольга Мироновапа Константин Саптеев илме тивĕçрĕç. Вĕсем чăваш халăхĕн аваллăхне аса илтерчĕç, пурнăç кун-çулне сăнласа пачĕç. «Пирĕн ĕç вĕçленмен-ха, тĕллевĕ паллă – районта малти вырăн йышăнса малалла каясси. Çанă тавăрсах ĕçлетпĕр», – теççĕ вĕренекенсем.

4-мĕш классем хушшинче вара Майя Жачеван ĕçĕ интереслĕ пулчĕ.

«Пурнăç ыйтăвĕсене тĕпе хурса вĕренекенсене пуçламăш классенчех тĕпчев ĕçне хăнăхтармалла, аслăрах классенче вара пуçаннă ĕçе малалла аталантарсах пымалла», – палăртрĕ шкул директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Н.Б. Горнова.

Пирĕн тĕслĕх илмелли те çук мар: пĕлтĕр Ирина Вахрушева районта 1-мĕш вырăна тухса, республикăри конкурсăн лауреачĕ пулса тăчĕ.

Апла пурте пĕрле ĕçлер, тăрăшар. Маттуррисем – ялан малта.

Елизавета ИВАНОВА.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕ.

Спорт хыпарĕсем

Орининсем йыхравлаççĕ

Шăмат кун, январĕн 16-мĕшĕнче, «Оринино» хуçалăх парнисене çĕнсе илессишĕн спорт ăмăртăвĕсем иртеççĕ. Вĕсем Орининти вăтам шкулăн спортзалĕнче пулаççĕ. Кăмăл тăвакан пур ĕç коллективĕсене те, шкул командисене те шашкăпа шахматла выляма (вăйăсен кашни тĕсĕпе 1 арçынпа 1 хĕрарăм хутшăнмалла) тата волейболла выляса вăй виçме (арçынсен командисем) чĕнеççĕ. Ăмăртусем 10 сехетре пуçланаççĕ.

Çулталăка ăнăçлă пуçларĕç

Январĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарта çулсеренех иртекен «Раштав ăмăртăвĕ» республикăри йĕлтĕрçĕсене пуçтарчĕ. Пирĕн районтан унта ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн Ярапайкассинчи тата Калайкассинчи уйрăмĕсенче ăсталăхĕсене туптакан 16 спортсмен хутшăнчĕ.

Аслă ӳсăмри хĕрсем хушшинче 5 километрлă дистанцире ирĕклĕ майпа ăмăртса Кристина Иванова (1-мĕш), Татьяна Иванова (2-мĕш), Анастасия Костина (3-мĕш) вырăн çĕнсе илнĕ. Вăтам ӳсĕмрисем хушшинче (5 км) Джамиля Баранова та çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ. Аслă яшсен ушкăнĕнче вăй виçнĕ (10 км) Станислав Васильев та республика ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна тухнă.

Боксерсен те ӳсĕмсем пур

Январĕн 8-10-мĕшĕсенче Çĕрпӳ хулинче бокс енĕпе республика чемпионачĕ иртрĕ. 15 пултаруллă боксер Муркаш район чысне хӳтĕлесе аван кăтартусемпе таврăнчĕ. Виçĕ кунра 5 пĕрремĕш тата 2 иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ вĕсем. Стас Кожевников, Николай Скворцов, Иван Налимов, Дмитрий Ржанов, Виталий Мешков тĕрлĕ виçеллĕ категорисенче ăмăртса çĕнтерӳçĕсен ятне çĕнсе илнĕ. Сергей Смирновпа Руслан Николаев – иккĕмĕш вырăнсенче.

Каласа хăвармалла, çак хастар яшсем С. Черкашинпа О. Сютруков тренер-преподавательсем патĕнче кунсерен ăсталăха туптаççĕ. Апла вĕсен пурин те хăйсен ĕçтешĕ Стас Кожевников Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командине кĕме тивĕçнишĕн те савăнмалла, унран тĕслĕх илмелле. Пултаруллă спортсменăн вара кăçал Атăлçи федералла округра иртекен ăмăртусенче республика чысне те хӳтĕлемелле пулĕ.

(Хамăр инф).

Сăвă йĕркисем

Пурăнасшăн эпĕ

Хăват çитмерĕ çапăçмашкăн паттăр.
Амантрĕç чĕререн каçкӳлĕм çĕçĕпе.
Сурать суран. Юнпа хĕрелнĕ кăкăр.
Çăлăнăça эп кĕтрĕм çĕрĕпе.
...Каçар, анне, çӳрерĕм эп хевтесĕр,
Каçар, атте, айванлăхшăн мана.
Ĕнентĕм мар-и Ырăна çур ĕмĕр,
Асăрхаман Усалăм-тăшмана.
Ак халь чĕре, аманнине пăхмасăр,
Тапать татах, тапать, тапать, тапать...
Эп çĕкленесшĕн çĕр çинчен сасартăк,
Эп пурăнасшăн çĕр çинче татах!..

В. КОНСТАНТИНОВ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Конкурс

АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» объявляет конкурс на монтаж пожарно-охранной сигнализации в здании (2 этажа) редакции.

Заявки от предприятий и ИП принимаются в течение недели до 15 часов 20 января 2010 года в редакции по адресу: с. Моргауши, улица Мира, дом 9 А.

Требование – лицензия на соответствующую деятельность.

Телефон для справок: 62-1-36, 62-1-35.

СПУТНИКОВОЕ АНТЕННЫ «ТРИКОЛОР» 6700 руб. Установка, гарантия Тел.: 8-906-385-29-30. 1-6.

В ООО «Заря» («Автомиг») требуется официантка. Тел.: 8-903-066-20-73.

Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР» с установкой, гарантией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 4-4.

Плиты пустотные и п-образные, ж/б балки, фундаментные блоки, кирпич бой, кирпич, керамзит, все б/у. Тел.: 8-905-343-13-73, 8-905-343-67-50. 5-5.

ЗАЙМЫ и СБЕРЕЖЕНИЯ для пайщиков
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 5
(83541) 6-23-10, 37-48-92
КПКГ “Капитал Экспресс”
выгодные % ставки
Св-во о рег. 21 №002062014 от 23.09.2009г.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:230701:565, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:230701, для производства сельскохозяйственной продукции, площадью 1155158 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Участница долевой собственности Чекалова Полина Геннадьевна, 21.03.1953 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. М. Татаркасы, ул. Центральная, д. 29, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Сундырский», участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Большесундырского сельского поселения.
2. Чекаловой Полине Геннадьевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. М. Татаркасы, ул. Центральная, д. 29.

Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование заведующему хирургического отделения МУЗ «Моргаушская ЦРБ» Г.М. Огурцову в связи со смертью тестя и врачу-окулисту Л.П. Огурцовой в связи со смертью отца

ПЕКПАТРОВА
Павла Титовича.

Отдел культуры и архивного дела, райком профсоюза работников культуры Моргаушского района выражают искреннее соболезнование родным и близким в связи с тяжелой утратой – безвременной кончиной бывшего библиотекаря

ЛЕБЕДЕВОЙ
Ольги Васильевны.

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективĕ кунта секретарь-машинисткăра тата нумай çул вырăнти радиовещани дикторĕнче ĕçленĕ

Ольга Васильевна ЛЕБЕДЕВА

вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

Мăн Хураçкари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта директор çумĕ пулса ĕçлекен Р.В. Прокопьеван пиччĕшĕ

Валерий Владиславович ТЕРЕНТЬЕВ

сарăмсăр вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

ООО «Энергосервис» реализует за б/н и наличный расчет ж/б кольца для колодцев и выгребных ям. Оказывает услуги по бурению. Требуются на работу бухгалтер, водители на ГАЗ-53 и на личном автомобиле. Оплата своевременная, 2 раза в месяц. Тел.: 60-2-39, 8-905-342-98-11.

Вăкăрсем туянатăп. Тел.: 8-903-063-07-57.

Продаем зерно: ячмень, пшеницу, овес. Покупаем бычки. Тел.: 8-905-199-61-77.

Продаю трехкомнатную квартиру в с. Б. Сундырь, индивидуальное отопление. Тел.: 8-903-065-38-40.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 12.01.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3890.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.